**ЧĂВАШ ХĔРĔСЕМ**

Хĕрелнĕ çырла пек илемлĕ хĕрсем
Нумай пирĕн лăпкă, ĕçчен ялсенче —
Вĕсен хура куçлă сăпай сăнĕсем
Вĕри хĕм чĕртеççĕ яш çын чĕринче.

Хăва хуллисем пек яштак пĕвĕсем
Савсах пăхтараççĕ маттур каччăна
Шăнкăр шыв юххи пек янрав сассисем
Уçса çемçетеççĕ чи чăркăш чуна.

Ĕçе тытăнсан та, чипер хĕр алли
Вăрт-варт çаврăнать çех, машина майлах.
Ĕçчен сар хĕрсемшĕн савни пулмаллин
Хăйсен те ĕçпех тек хĕрсе çунмалла.

1923

*Элкер, С. Чăваш хĕрĕсем : [сăвă] // Элкер, С. Хурапа шурă. Тĕрлĕ вăхăтра çырнисем : проза, поэзи, аса илӳсем, кун кĕнекинчен, çырусем, хаклавсем / С. Элкер ; В. Г. Родионов пухса йĕркеленĕ. – Шупашкар, 1994. – С. 238.*